Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

39 (7893) № * Юн кун, 2011 ҫулхи ҫу (май) уйӑхӗн 25-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Пурнӑҫӑн аслӑ ҫулӗ такӑр пултӑр!



**Юлашки шӑнкӑрав**

***Паян пирӗн районти 9-мӗш класран вӗренсе тухакан 390 тата 11 класс пӗтерекен 243 шкул ачишӗн юлашки шӑнкӑрав янӑрать.***

***Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан Анна Васильева, Ирина Смирнова тата Анастасия Донскова та Чуманкассинчи вӑтам шкулта вун пӗр ҫул ӑс пухса пурнӑҫӑн аслӑ ҫулӗ ҫине тухаҫҫӗ. Пурӗ вара кунта кӑҫал 11-мӗш класран 18 ача вӗренсе тухса шкулпа сыв пуллашать.***

***Умра – пӗрлехи патшалӑх экзаменӗсем. Яшсемпе хӗрсене ӑнӑҫу сунатпӑр. Шкул хыҫҫӑнхи ҫул такӑр пултӑр. Умри йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пыма вӑй-хал ҫиттӗр сирӗн.***

*Н. НИКОЛАЕВА сӑн ӳкерчӗкӗ.*

## Лайӑххин те ҫитменлӗх, начаррин те курмалли пурах

**Ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсен канашлӑвӗнчен**

***Ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсен канашлӑвӗсем кашни уйӑхрах иртеҫҫӗ. Кун йӗркинчи пӗлтерӗшлӗ ыйтусене сӳтсе яваҫҫӗ вӗсенче. Ку хутӗнче вара майӑн 20-мӗшӗнче йӑлана кӗнӗ канашлӑва выраҫнсене тухса ирттерме шутларӗҫ. Ҫӗр хут илтиччен пӗр хут хӑвӑн куҫупа курни лайӑххах тесе ахалтен каламан вӗт. Ытти ял тӑрӑхӗсенче пулса курнӑ май кашнин валли курмалли-вӗренмелли, усӑлли тупӑнать. Хӑв мӗн тунине те критикӑлла хак паратӑн.***

12 ял тӑрӑхӗнче пулса курчӗҫ ҫав кун ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем. Мӗн тухса тӑрать-ха куҫ умне чи малтанах. Никамшӑн та ҫӗнӗлӗх мар пулин те, малтанах ял урамӗсен тасалӑхӗн, йӗркелӗхӗн, тирпейлӗхӗн ыйтӑвне хускатма тивет. Нумай ҫӗрте урамсенче йӗркелӗ ҫул суккипе пылчӑкра ҫӑрса пӗтернӗ. Вӗсене типӗ ҫанталӑкра грейдерпа та пулин тикӗслесе тухмалла. Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов ҫавна аса илтерчӗ. Хӑш-пӗр подряд организацийӗсем хӑйсене ҫирӗплетсе панӑ ҫулсене кирлӗ пек пӑхса тӑмаҫҫӗ. Хӗллехи вӑхӑтра та ку ыйту патне пӗр хут кӑна мар таврӑнма тивнӗ. Ҫавӑнпа та кун пеккисенчен ҫирӗпрех ыйтма тивет. Хӑйсен тивӗҫӗсене пурнӑҫламаҫҫӗ пулсан вара вӗсемпе малашне килӗшӳсем тума та кирлӗ мар.

Кунсӑр пуҫне ҫынсен кирпӗчи, вак чулӗ, хӑми, вутти-шанки, ытти строительство материалӗ урам хушшинче йӑваланса выртни куҫа валалать. Уйрӑм хуҫалӑхра строительство ӗҫӗсем пынӑ вӑхӑтра ҫакна ӑнланма пулать-ха. Анчах та ку «пурлӑх» хӑш чухне ҫавӑнтах «тымар ярать». Чуманкасси, Уйкас Янасал, Йӳҫкасси ял тӑрӑхӗсенче, ытти ҫӗрте те кун пек урамсем ҫук мар-ха. Ҫав вӑхӑтрах Юнкӑ ял тӑрӑхӗнчех ялсенчи тасалӑха йӗркелӗх ҫине ытларах тимлӗх уйӑрни куҫ кӗрет. Пушар хӑрушсӑрлӑхне тивӗҫтерес тӗлӗшпе ялсенче шыв цистернисем вырнаҫтарса тухма та май ҫитернӗ. Ярославка ял тӑрӑхӗнче те ҫу кунӗсем ҫитсе килнӗ май пушар хӑрушсӑрлӑхӗ пирки манмаҫҫӗ: ялсенче шыв цистернисем те пур, каҫхине дежурство тӑрассине те йӗркеленӗ.

Выӑрӑнти ыйтусене татса парас ӗҫе депутатсене, старостӑсене, ял ҫыннисене ытларах явӑҫтарма тӑрӑшмалла. Пуҫарулӑ ҫынсем пулни савӑнтарать. Йӳҫкасси ял тӑрӑхӗнчи Матьӑк ялӗнче акӑ хӑйсен вӑйӗпех 100 пин тенкӗлӗх строительство ӗҫӗсем пурнӑҫласа пӗве тунӑ. Вӑрманкассинче А.К. Кириллов хӑйӗн ҫурчӗ патӗнче бассейн йӗркеленӗ.

(Вӗҫӗ 2 стр.).

## Хамӑр мар пулсан тата кам?

**Тасалӑхпа тирпейлӗхшӗн**

***Юлашки вӑхӑтра хамӑр пурӑнакан тавралӑх илемӗ, тасалӑхӗ, тирпейлӗхӗ ҫине ытларах тимлӗх уйӑрма тытӑнни ӑнсӑртран мар. Унччен хиллех пурӑнсан тӗрӗссипе тепӗртакран каяш, ҫӳп-ҫап айне пуласси те инҫе мар. Теприсем ҫакӑн пек шухӑшлаҫҫӗ: манӑн кил-тӗрӗш таврашӗнче таса та илемлӗ пултӑр, ытти ҫӗрти мана интереслентермест. Ҫапла вара пухӑннӑ ҫӳп-ҫапа пахча хыҫӗсене, вӑрмансемпе ҫырмасене кайса сиплеҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне ҫул хӗррисемпе автобус чарӑнӑвӗсенче, вӑрман тӑрӑхӗсенче те ҫӳп-ҫап тултарнӑ михӗсем купаланса выртни йӗркеллӗ пулӑм мар. Ку тӗлӗшпе йӗрке пулӗ-и? Ҫак ыйту ҫине хурав пама ыйтрӑм Муркаш ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхне Николай Иванович НИКИТИНА.***

– Малашне кил тавра-шӗнче пухӑннӑ ҫӳп-ҫапа йӗркеллӗ ӑсатса тӑма тытӑнас пулать. Ҫавна валли Ивановка ялӗ патӗнче ятарлӑ полигонӑн пӗрремӗш черетне хута янӑ ӗнтӗ. Анчах та хальхи вӑхӑтра кирек епле услуга таврашӗшӗн те тӳлеме тивет. Ҫӳп-ҫап турттарасси те укҫа-тенкӗпе ҫыхӑннӑ. Ҫавӑнпа та малашне килсерен пухса михӗсене тултарнӑ йӑла каяшӗпе ҫӳп-ҫапа укҫалла тиесе ӑсатма тытӑнмалла пулать. Муркашри пурӑнмалли ҫуртйӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх предприятийӗ ҫакна йӗркелеме хатӗр. Ятарлӑ автомашина вырӑна хӑҫан пырассине ял тӑрӑхӗн администрацийӗ пӗлтерсе тӑрӗ. Ҫакӑ нимӗнле ҫӗнӗлӗх те, курман-илтмен япала та мар. Нумай хваттерлӗ ҫуртсенче пурӑнакансем пӗрремӗш ҫул мар ӗнтӗ каяш турттарнӑшӑн йӗркеллӗ тӳлесе тӑраҫҫӗ вӗт-ха.

Район центрӗнче хальхи вӑхӑтра ҫакӑн пеккине те курма пулать. Хӑшӗсем ҫӳп-ҫап миххисене ҫӑмӑл автомашинӑсемпе тиесе килсе нумай хваттерлӗ ҫуртсем патӗнче вырнаҫтарнӑ контейнерсене сиплесе хӑвараҫҫӗ. Муркашра харпӑр хӑйсен уйрӑм ҫуртӗсенче пурӑнакансем тӗлӗшпе те ҫакна каламалла. Каланине тӑна илме тӑрӑшмаҫҫӗ пулсан кун пеккисем тӗлӗшпе ҫирӗпрех мерӑсем йышӑнмалла пулӗ. Ӗҫ-пуҫ намӑслантарнипех вӗҫленмӗ. Пӗчӗк мар штрафсем тӳлемелле пуласси каламасӑрах паллӑ.

Ҫавна та практикӑлла шухӑшлатпӑр. Калӑпӑр ку е вӑл хуҫалӑхран чылай хушӑ нимӗнле ҫӳп-ҫап тавращӗ те тиесе ӑсатмаҫҫӗ. Паллӑ: кун пеккисем каяш таврашне «вырнаҫтармалли» урӑх мелпе усӑ кураҫҫӗ. Е ҫырмана ӑсатаҫҫӗ, е михӗсене тултарса ҫын курман чухне унта-кунта кайса пӑрахаҫҫӗ. Ун пек ҫынсене ял администрацийӗ тата пурӑнмалли ҫуртйӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх предприятийӗ ятарлӑ учета илӗ. Ҫӳлте асӑннӑ фактсене тупса палӑртсан вӗсен те «пуҫ хыҫма» тивӗ.

Юлашкинчен ҫавна кӑна каласшӑн. Пирӗн тасалӑх, илемлӗх, йӗркелӗх вӑл – пирӗн культура, эпир хамӑра хамӑр хаклама пӗлни. Кунта калани, ятлани, намӑслантарни, штрафлани те пӗлтерӗшлӗ мар. Хамӑрӑн авалтан пыракан чӑвашлӑх туйӑмне ҫухатас марччӗ. Пӗлтерӗшлӗреххи – ҫак чӑнлӑха пӗтӗм чун-чӗрепе, ӑшран туйса илме пултарни.

**В. ШАПОШНИКОВ калаҫнӑ.**

**Майӑн 27 мӗшӗ – Пӗтӗм Раҫҫейри библиотекӑсен кунӗ**

**ХИСЕПЛӖ БИБЛИОТЕКАРЬСЕМ, ҪАК ӖҪӖН ВЕТЕРАНӖСЕМ ТАТА ВУЛАКАНСЕМ!**

Сире ҫывхарса килекен Пӗтӗм Раҫҫейри библиотекӑсен кунӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатӑп.

Питӗ пӗлтерӗшлӗ те пархатарлӑ ӗҫ тӑватӑр эсир. Районта пурӑнакансене кӗнекепе туслашма вӗрентетӗр. Ҫапла майпа вӗсен тавракурӑмне тата культурине аталантарма, вӗсене пурнӑҫри йывӑрлӑхсене татса пама пулӑшатӑр. Мӗншӗн тесен кӗнеке нумай вулакан ҫын нумай пӗлет, кирек епле ыйтӑва хуравне те тупма пултарать. Ҫакна ачасем мӗн пӗчӗкрен ӑша хывса ӳсчӗр тесе те нумай тимлетӗр. Аслисемпе те, шкул ачисемпе те тем тӗрлӗ мероприяти ирттеретӗр.

Халӑха кирлӗ, тӗрлӗ енлӗ информаци парассипе те тӑрӑшса ӗҫлетӗр. Хальхи вӑхӑтра халӑхӑн тӗрлӗ сийне тӗрлӗ пулӑшу пама библиотекӑсенче условисем ҫителӗклӗ. Вӗсенче паянхи кун ыйтакан видеосистемӑсем, видеомагнитофонсем, компьютерсем пур. Кунта кирек хӑҫан та Интернета тухма пулать.

Библиотекарьсем районта, республикӑра иртекен тӗрлӗрен конкурссене хутшӑнни, вӗсенче ҫӗнтерни эсир хӑвӑр ӗҫӗре чун-чӗре хушнӑ пек пурнӑҫланине ҫирӗплетсе парать. Малалла та ӗҫӗр ӑнса пытӑр. Библиотекӑсемпе вулакансем хушшинчи ҫыхӑну татах та ҫирӗплентӗр. Пурсӑра та ҫирӗп сывлӑх, телейлӗ вӑрӑм кун-ҫул сунатӑп.

**Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. ИВАНОВ.**



**Ҫак чӑнлӑха яланах асра тытаҫҫӗ ачасен районти тӗп библиотекинче вӑй хуракан Е.И. Налимова заведующипе М.М. Скворцова методист тата Т.В. Шурнеева библиотекарь. Кӗнекесен фончӗ 21 пине яхӑн, ҫуллен библиотека пулӑшӑвӗпе 2000 ҫын ытла усӑ курать. Район центрӗнчен кӑна мар, пӗтӗм районтан ҫӳреҫҫӗ кунта. Кӗнекесемпе тивӗҫтернипе пӗрлех кунта ачасемпе, ашшӗ-амӑшӗсемпе тӗрлӗрен интереслӗ мероприятисем, тӗл пулусем сахал мар ирттереҫҫӗ. Тӗл пулусене ача-пӑча писателӗсене, психологсене, врачсене те чӗнеҫҫӗ. Нихӑҫан та кичем мар кунта.**

**В. ШАПОШНИКОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

**Район уй-хирӗсенче**

## Ыранхи тухӑҫшӑн

Ӗнерхи кун тӗлне районӗпе тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене 7272 гектар (84 процент) акса хӑварнӑ. Пӗрлешӳллӗ тата хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенчен 13-шӗ ку ӗҫе вӗҫленӗ.

Пӗр ҫул ӳсекен курӑксене 1727 гектар (100 процент) акнӑ.

13 хуҫалӑхра ҫӗр улми лартаҫҫӗ. Районӗпе ӑна 359 гектар (29 процент) лартнӑ.

Пахча ҫимӗҫ 57 гектар (42 процент) лартма ӗлкӗрнӗ. «Восток», «Оринино» хуҫалӑхсенче, «Моргаушская» чӑх-чӗп фабрикинче акнӑ культурӑсене хими мелӗпе хӳтӗлес ӗҫсене тытӑннӑ.

**Йыхрав**

## Акатуй – июнӗн 10-мӗшӗнче

Районти 58-мӗш юрӑ, ӗҫ тата спорт уявне Лантӑш вӑрманӗн уҫланкинче ирттереҫҫӗ. Уява чӑваш йӑлипе ҫурхи уй-хир ӗҫӗсене вӗҫленӗ ятпа йыхравлаҫҫӗ.

Акатуй ирттерме район администрацийӗн майӑн 20-мӗшӗнчи 440 номерлӗ йышӑнӑвӗпе ятарлӑ ӗҫ ушкӑнӗ йӗркеленӗ, мероприятисен планне ҫирӗплетнӗ. Ӗҫ ушкӑнне райадминистраци пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов ертсе пырать.

Ял тӑрӑхӗсенче те Акатуй уявӗсене районтинчен маларах ирттерме хушнӑ.

Районти Акатуй 10 сехетре пуҫланать.

# Лайăххин те çитменлĕх, начаррин те курмалли пурах

(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).

Пуçаруллă ĕç тĕслĕхĕсем ытти çĕрте те çук мар. Акă Турай ял тăрăхĕнче территорисене тирпей-илем кĕртес, пĕвесемпе плотинăсене кирлĕ шайра тытса тăрас ыйтусене куç ытамĕнчен вĕçертмеççĕ. Уйкас ялĕнче вара кивĕ кĕлет çурчĕсене сӳтсе ял йĕри-тавра хӳме тытса çавăрнă. Строительство материалĕсем те ал айĕнчех, ял хăчĕ те урăхларах. Тĕрĕссипе вара ытти çĕрте те юхăнса ларакан кун пек çуртсем сахал мар.

Орининсенчен те вĕренмелли çук мар. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.С. Волков каласа панă тăрăх 16 ялтан 12-шĕнче кирлĕ йĕрке туса çитернĕ. Ытти çĕрте те тирпей-илем ĕçĕсем пыраççĕ. Çынсен активлăх çук мар. Кашни хуçалăхранах пуçтарнă 500-шер тенкĕ укçапа юсав ĕçĕсене те тăваççĕ, тĕрлĕ мероприятисем ирттереççĕ, ветерансем валли парнесем те туянаççĕ.

Москакасси ял тăрăхĕнчи Мăрсакасси ялĕнче пурăнакансен пуçарулăхĕ вара пурне те интереслентерсе ячĕ. Ял хушшинчи тарăн варта вĕсем сад лартса ӳстересшĕн. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.Н. Матросов çакна шанать. Унти йывăçсене касма пуçăннă ĕнтĕ. Сăмах май ку ял иртнĕ çул яллă вырăнта ĕçе йĕркелессипе грант çĕнсе илме пултарнă.

Ял тăрăхĕсен территорийĕсенче вырнаçнă пĕчĕк предприятисене, хресчен (фермер) хуçалăхĕсене те çитсе курчĕç пуçлăхсем. Юнкă ял тăрăхĕнчи «ВаСем» ООО ĕçĕ-хĕлĕ пурне те кăмăла кайрĕ. В.С. Кондратьев пахча çимĕç çитĕнтерессипе ĕçлет. 3 теплицăра купăста калчи ӳстерет. Ăна акса тума Голландире туса кăларнă 2 миллион та 600 пин тенкĕ тăракан оборудовани туяннă. Кăçал купăста 20 гектар çинче, çĕр улми 120 гектар лартма палăртать. Сăмах май çĕр улми лартасси вĕçленсе пырать ĕнтĕ.

Мăн Сĕнтĕрти пластик чӳречесем туса хатĕрлекен «Корина» предприятире, шалти ĕçсен ветеранĕ М.А. Бычков Ильинкăра туса лартнă «Юман» комплексра пулса курни те усăсăр мар.

Ильинка тенĕрен ку территорире аваллăх палăкĕсемпе унпа çыхăннă вырăнсем сахал мар. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем чăвашсен чи ватă юманĕ, паллă вăрманçă Б.И. Гузовский хăй лартнă 100 çулхи çĕпĕр лиственници патне, унăн килçурчĕ пулнă вырăна та çитсе курчĕç. Ку территорирех Чăваш Енри пĕртен-пĕр шыв сикки тата ытти интереслĕ вырăнсем те пур.

Кунсăр пуçне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем çав кун Уйкас Янасал ял тăрăхĕн территорийĕнчи чăвашсен пĕрремĕш «Хыпар» хаçатне никĕслекенĕн Н.В. Никольскийăн паркĕнче пулса унăн палăкĕ умне чĕрĕ чечексем хучĕç, Катькас ял тăрăхĕн территорийĕнче Шатракассинчи православи чиркĕвĕнче пулчĕç.

Район центрĕ вара территорисене тирпей-илем кĕртессипе пуриншĕн те тĕслĕх пулса тăрать. Çулленех çуркунне вăл çĕнĕ тум тумланать тейĕн. Кăçал та Муркаш урамĕсенче 9 пин чечек лартса хăварнă. Ку ĕç малалла пырать. Тавралăх тирпейленсе илемленсе пынипе пĕрлех çынсен культура шайĕ те ӳссе пыни сисĕнет.

Канашлу итогĕсене Хорнуй ял тăрăхĕн территорийĕнче пĕтĕмлетрĕç. «Паян вырăнсенче пулса курни никамшăн та усăсăр мар,– палăртрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хăйĕн пĕтĕмлетӳ сăмахĕнче.– Пурин валли те курмалли, вĕренмелли пур. Кунпа пĕрлех мĕн туса çитерейменни те уçăмланчĕ. Çакă кулленхи ĕçре пулăшу пулĕ кăна».

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашлăвĕнчен



**Сăн ӳкерчĕкре: ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем «ВаСем» предприятире теплицăра купăста калчи ӳстермелли çĕнĕ технологипе паллашаççĕ.**

## Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă юратнă аннене, кукамая, йăмăка, тăвана – Лантăш ялĕнче пурăнакан **Елизавета Александровна БАРСОВĂНА** майăн 24-мĕшĕнче 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ырă та ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Яланах сывлăхлă, хавас кăмăл-туйăмлă пулмалла пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Малашне те хĕрӳпе, мăнукусемпе, мĕн пур тăванпа пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Пире ырă сунса яланах пулăшса тăнăшăн тав тăватпăр.

**Салампа: Владимировсен, Яшковсен, Федоровсен, Кудряшовсен çемйисем.**



Пирĕн юратнă çыннăмăра – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Александр Михайлович ОШМАНОВА** сумлă юбилей ячĕпе саламлатпăр. Майăн 26-мĕшĕнче унăн çуралнă кунĕ.

Санăн паян çуралнă кун,
Алă çул вăл – паллă çул.
Хыçа юлĕ алă çул,
Малашнехи пурнăçа татах пурăн алă çул.

Сана эпир яланах юрататпăр, эсĕ пурри пирĕн телей, ĕмĕрӳ вăрăм пултăр, телейлĕ пурнăçпа пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, пиччĕшĕпе шăллĕ, Скворцовсем, Тимофеевсем, Орловсем, Дмитриевсем тата çывăх тăванĕсем.**



Çу уйăхĕн 24-мĕшĕнче пирĕн юратнăран та юратнă, çепĕç те кăмăллă мăшăрăн, аннен, кукамайăн, асаннен – Сентимĕр ялĕнче пурăнакан **Зоя Николаевна КОЛБАСОВĂН** çуралнă кунĕ. Эпир ăна 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан ăшă туйăмсемпе, çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр, телей, çирĕп сывлăх сунатпăр, Турри сана татах та вăрăм кунçул пиллетĕр. Эс пурри – пирĕн савăнăç. Нумай çул хушши пире савăнтарса пурăнмалла пултăр санăн. Тавах сана пуриншĕн те, юратнăшăн, ятланăшăн, çын тунăшăн.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 3 мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**

Хуракасси выççăлккинче магазинта сутуçăра ĕçлекен **Елена Апполинаровна АЛЖИРОВĂНА** ăшшăн саламлатпăр. Унăн çак кунсенче çуралнă кунĕ пулчĕ. Лена ĕçлекен магазинта халăха кирлĕ таварсем яланах çителĕклĕ, вăл халăх ыйтнине куллен тивĕçтерме тăрăшать. Лена, эсĕ тавар туянакансемпе яланах май хĕвелĕ пек ырă кăмăллă пул. Сана ĕçре ăнăçу, пурнăçра телей, çемьере юрату сунатпăр.

**Салампа тавар туянакансем.**

Хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, асаттене – Чуманкасси ялĕнче пурăнакан **Александр Иванович ЗАМЯТИНА** сумлă юбилей – 50 çул тултарнă ятпа пĕтĕм чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăй-хал сунатпăр. Телейпе ăнăçу яланах санпа пĕрле пулччăр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр. Пире пулăшма тăрăшнăшăн, пирĕнпе яланах ырă кăмăллă пулнăшăн пысăк тав сăмахĕ калатпăр. Турри пиллĕх патăр сана, телей кăна парнелетĕр.

**Салампа мăшăрĕ, ачисем, кĕрĕвĕ, мăнукĕ, мĕн пур тăванĕ.**

# «Пирĕн алăксем сире валли ялан уçă!»

## Вĕрентӳ

*Кăçал Етĕрнери профессипе техника техникумĕ хăйĕн 60 çулхи юбилейне паллă тăвать. Çак тапхăрта ку вĕренӳ заведенийĕнче ял хуçалăхĕнче тата ытти отрасльсенче вăй хуракан çĕршер, пиншер яш-кĕрĕм вĕренсе тĕрлĕ специальноçа алла илнĕ, район тата ун тулашĕнче анлă сарăлнă. Техникумра вăй хуракансен ĕçне кунтан вĕренсе тухнисем ырăпа палăртаççĕ. Çакна вара вĕсен çырăвĕсем те çирĕплетеççĕ.*

*Унти ĕç-хĕлпе тĕплĕнрех паллашас тĕллевпе эпĕ вĕренӳ заведенийĕн ертӳçипе О.В. ПАЛИКИНПА калаçрăм, хăш-пĕр ыйту çине хуравлама ыйтрăм.*



**– Олег Валентинович, паянхи кăткăс лару-тăрура сирĕн вĕренӳ заведенийĕ мĕнле пурăнать, аталанать тата малашнехи ĕçе епле палăртать?**

– Чылайăшĕ пирĕн вĕренӳ заведенине профессипе техника училищи тенипе пĕлет, малашне вăл техникум пулĕ. Паянхи пурнăç вара тăтăш çĕнĕлĕхсене шырама ыйтать. Çавна май пирĕн те хăшпĕр çул-йĕре суйласа илме тиврĕ. Маларах эпĕ кунта директор çумĕ пулса ĕçленĕ, самана вара пире тĕрлĕ йывăрлăх витĕр кăларчĕ. Çапах та, куратăр ĕнтĕ, пĕрлехи тăрăшулăхпа малаллах талпăнатпăр, вĕренекенсене тĕрлĕ професси пĕлĕвĕ паратпăр, малашне татах та ытларах яш-кĕрĕме хамăр пата йыхравлатпăр.

**– Вĕренекенсен йышĕ еплерех, паянхи яш-кĕрĕм сирĕн еннелле туртăнать-и?**

Пирĕн патра 289 çын вĕренет. Вĕсене 31 педагог тĕрлĕ пĕлӳ тата воспитани парать. Вĕрентекенсен 80 ытла процентĕ аслă тата пĕрремĕш квалификаци категорине тивĕçнĕ. Вĕрентӳ ĕçне НПОн (пуçламăш професси пĕлĕвĕ) 4 профессийĕпе (ял хуçалăх производствин тракторист-машинисчĕ, автомеханик, повар-кондитер, пĕтĕмĕшле строительство ĕçĕсен мастерĕ) тата хушма професси пĕлĕвĕн 15 программине туса пыраççĕ. Паянхи яш-кĕрĕм пирĕн вĕренӳ заведенине хаклани сисĕнет, çакна вĕренме килекенсен йышĕ ӳсни те çирĕплетет.

**– Техникумăн пурлăхпа техника базиi паянхи кун ыйтăвне тивĕçтерет-и?**

– Техника бази 14 кабинетран (1 компьютер кабинечĕ), 6 вĕрентӳ мастерскойĕнчен, 2 лабораторирен, актовăй тата спорт залĕсенчен, столовăйран, библиотекăран, ял хуçалăхĕнче усă курмалли тĕрлĕ йышши техникăран тăрать. Эпĕ çакна начар тесе шутламастăп, чи кирли вара вĕренекенĕн вĕренес, алла тивĕçлĕ специальноç илес чăн туртăм пулмалла.

**– Ытти районсемпе, предприятисемпе, организацисемпе еплерех ĕçлесе пыратăр?**

– Кирек епле ĕçре те пĕрпĕрне ăнланса, тачă çыхăнса ĕçлени пысăк пĕлтерĕшлĕ. Паянхи куна Етĕрне, Муркаш, Хĕрлĕ Чутай тата Элĕк районĕсенчи 30 предприяти тата организаци валли ĕçлекенсем хатĕрлес енĕпе килĕшӳсем тунă. Вĕренекенсен производство практикине предприятисен ĕç вырăнĕсенче йĕркеленĕ.

**– Сирĕн шутпа Раççейри пĕлӳ парас ĕçе модернизациленин условийĕсенче çамрăксене ялтах хăварассин программине вăя мĕнле кĕртме пулать?**

– Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин правительствисен политики халĕ яла пулăшассипе тӳрремĕнех çыхăннă. Ял тăрăхĕсенче комплекслă компактлă çурт-йĕр туни, çамрăк специалистсене çурт-йĕрпе тивĕçтерни питĕ вырăнлă. Нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсемпе тивĕçтерни çамрăксене çĕр çинче ытларах ĕçлеме хистет. Çавăнпа та манăн тĕп тĕллев – квалификациллĕ специалистсене май пур таран хамăр тăрăхра ытларах хăварасси. Çавна май районсен экономикин аталанăвне пысăк тӳпе хывтарасси.

Ку ыйтăва районсен администрацийĕсемпе, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе тата ĕç паракансемпе тачă çыхăнса ĕçлесен ăнăçларах татса пама пулать.

Паян правительство шайĕнче çакăн пек шухăш çӳрет: тӳлевлĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсене хупса вĕсен никĕсĕ çинче профтехвĕрентӳ учрежденийĕсене уçмалла, мĕншĕн тесен рабочисен профессийĕсем çултан-çул ытларах та ытларах кирлĕ. Çак йывăрлăх пур çĕрте те палăрать. Чи малтан ял хуçалăхне кирлĕ кадрсем хатĕрлекен вĕренӳ учрежденине упраса хăвармаллах пирĕн.

**– Вăтам професси пĕлĕвĕн çĕнĕ системипе паллаштарсан ытлашши пулмĕ.**

– Ку вăл хăйне евĕр икĕ шайлă техникумсем (колледжсем). Пĕрремĕш шай – пуçламăш професси пĕлĕвĕ (НПО), унта вĕренекенсем рабочи специальноçĕсене алла илеççĕ. Иккĕмĕш шай – вăтам професси пĕлĕвĕ (СПО), унта автомобиль техникĕн, пĕтĕмĕшле строительство ĕçĕсен, бухгалтерпа электромеханикăн специальноçĕсене тата ыттисене те илме пултараççĕ.

**– Сирĕн сĕнĕвĕре Чăваш Республикин Вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерствинче шута илчĕç-и?**

– Çапла, министерство шайĕнче пирĕн шухăша ырларĕç. Çакă вăл паянхи кун ыйтăвĕ. Етĕрнере вăтам професси пĕлĕвĕн учрежденине туса хуни темиçе ыйтăва татса пама пулăшать. Пĕрремĕшĕнчен ку вăл – хушма инвестицисем; иккĕмĕшĕнчен, обществăшăн усăллă мĕн пур ĕç енĕпе квалификациллĕ работниксем (рабочисемпе служащисем) хатĕрлени; виççĕмĕшĕнчен, вĕренекенсем ĕç рынокĕнче кирлĕ темиçе профессие суйласа илме пултарни, суйласа илнĕ тăрăх пуçламăш тата вăтам професси пĕлĕвĕ илни.

Аталаннă çĕр-шывсенче, тĕслĕхрен, Америкăра, пуçламăш классем хыççăн профиль енĕпе вĕрентессине тахçанах пурнăçласа пыраççĕ. Пурнăç çак ен эффективлă пулнине çирĕплетет.

Пирĕн профлицей никĕсĕ çинче икĕ шайлă техникум (колледж) туса хуни – ку вăл пурнăçланма пултаракан пулăм. Пирĕн çакна валли квалификациллĕ специалистсем, япăх мар пурлăхпа техника бази, пĕр-пĕрне ăнланни тата республика, район шайĕсенче, районти предприятисемпе ял хуçалăх кооперативĕсен ертӳçисем пулăшни пур, вĕсем пирĕнпе чылай вăхăтлăха çыхăнса ĕçлеме килĕшӳ тума хатĕр.

**– Çапах та сирĕн патра хăш ӳсĕмрисем пĕлӳ пухма пултараççĕ?**

– 9 класс вĕренсе пĕтернисем пирĕн патра вĕренме тата тĕрлĕ специальноç (тракторист-машинист сельхозпроизводства, автомеханик, мастер отделочных работ, мастер общестроительных работ, повар, кондитер, портной) алла илме пултараççĕ. Вĕсемсĕр пуçне 2 – 6 уйăхлăх ятарлă курссем те йĕркеленĕ.

Хăш-пĕр çĕнĕлĕх çинче манăн уйрăмах чарăнса тăрас килет. Кунта тĕрлĕ ушкăн йĕркеленĕ. Пĕрремĕш ушкăна 9 класс пĕтернисем кĕреççĕ. Вĕсене эпир малашне электротехника енĕпе (СПО) Чăваш патшалăх университетĕнче пĕлӳ илме хатĕрлетпĕр.

Иккĕмĕш ушкăна 10 – 11 класс пĕтернисем кĕреççĕ. Вĕсемпе эпир техник специальноçне вĕрентессипе ĕçлетпĕр. Икĕ ушкăнрисем те пирĕн патра вĕренсе тухнă хыççăн малашне инженер специальноçне Чăваш патшалăх университетĕнче тата ял хуçалăх академийĕнче экзамен тытмасăр тата тӳлевсĕр вĕренме пултараççĕ. Вĕренĕве 3-мĕш курсран пуçлаççĕ.

Пирĕн студентсен кунти пурнăç условийĕ пĕртте начар мар. Кунне виçĕ хутчен тӳлевсĕр апатлантаратпăр. Общежитире пурăнмалли вырăнсем пур. Çавăн пекех çул çинче çӳреме проездной валли укçа паратпăр.

Пирĕн пата вĕренме килес кăмăллисем 8 (83547) 2-23-44 телефон номерĕпе шăнкăравлама е сайта пăхса пĕлме пултараççĕ. Хисеплĕ яш-кĕрĕм, сире хамăр патăмăра хапăл туса кĕтетпĕр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

# «Ирĕк» сывлăшпа антăхсах каяс марччĕ...

Ял тăрăхĕсенче профилактика кунĕсем пыраççĕ

***Ял тăрăхĕсенче профилактика кунĕсем пĕр хутчен пур çĕрте те иртрĕç. Асăннă мероприяти иккĕмĕш хут пулма пуçларĕ. Чуманкасси ял тăрăхĕнчен пуçланчĕ вăл. Профилактика кунĕ район администрацийĕ çумĕнчи профилактика канашĕн, районти çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хÿтĕлессипе ĕçлекен тата Чуманкасси ял тăрăхĕ çумĕнчи профилактика канашĕсен пĕрлехи ларăвĕнчен пуçланчĕ.***

Пĕрлехи ларура шкулта йĕркене пăснă ачасене сÿтсе яврĕç. Сăпкара выртнă чух ачасем йĕркерен тухмаççĕ-çке. Ку ачана та çемьере тимлĕх çитмен пуль. Шкулти психолог калана тăрăх малтанхи çулсенче тăван мар ашшĕ вĕсене пиччĕшĕпе иккĕшне час-час кÿрентерни те пулман мар. Килте укçа-тенкĕ çитсе кайманни те ачана урăх çынсен япалисене кĕсьене чикесси патне илсе çитерменши? Амăшĕ упăшки вилнишĕн ачисене тухакан пособие тутарма ма вăхăтра документсем туса паман-ши? Çав 4 çулта самаях укçа килетчĕ вĕт-ха. Тен кĕçĕн ачи тĕрĕс çултан пăрăнман та пулĕччĕ.

Урăх ку йăнăша тумастăп тесе шантарчĕ вĕренекен. Çаплах пултăрччĕ. Тивĕçлĕ пĕтĕмлетÿ тума вăхăт ĕнтĕ.

Ларура пăхса тухнă тепĕр çул çитмен çамрăк та хăйĕн пурнăçĕ хăйĕн аллинче пулнине ăнланасса шанас килет. Эрех ырри патне çитерменнине хăй çинче «тĕрĕслерĕ» вăл: реанимаци койки çинче пулса курма тÿр килчĕ. Ыттисем хыççăн каймалла маррине, пĕр шутламасăр тунă утăм пурнăçа пачах тепĕр майлă çавăрса хунине çирĕплетекен тĕслĕх ку.

Ачан пурнăçĕ çемьерен пуçланнине пур ашшĕ-амăшĕ те ăнланмасть пуль çав. Çакна ку ял тăрăхĕнчи 11 çемьере пулни те кăтартса парать. Профилактика кунĕ пĕрремĕш хут иртнĕ чух ку çемьере кăçал шкула каймалли ачана ача садне яратпăр, тенĕччĕ ашшĕпе амăшĕ.

– Ямаççĕ те-ха, – терĕ хĕр ача хăй.

– Каяс килет ача садне.

Мухмăрлă ашшĕне хĕр ача ача садĕнче тĕрлĕ енлĕн аталанма пултарасси шухăшлаттармасть пулас. Амăшне те. Час-часах эрех ĕçкелесен ача шухăшĕ пĕтет пуль çав вĕсен.

Тепĕр çемьере вара 40 çултан иртнĕ хĕрарăм ура çинче аран-аран тăрать.

– Упăшка Мускава ĕçлеме кайнă, – тет вăл.

Хăй касура, киле йăпăрт кĕрсе тухрăм тесе ăнлантарма хăтланать. Кăнтăрлачченех калаçайми ÿсĕрскер ачине шкултан килсен мĕн çитерме шутлать-ши?

Ку хĕрарăмăн хăй пекех эрех юратакан тантăшне килте тĕл пулаймарăмăр.

– Тытса каймалла ăна. Пĕр чарăнми ĕçет, – терĕç ун пирки пĕр ялта пурăнакансем.

Унăн ачишĕн те шкултан таврăнсан вĕри апат кĕтесси тĕлĕкре кăна иккен. Мăшăрĕсем аякка ĕçлеме кайнă хĕрарăмсем «ирĕк» сывлăшпа антăхса кайнă пулмалла: ачисем çинчен те маннă.

Ачине пĕччен çитĕнтерекен амăшĕ те тепĕр çемьере мухмăрлаччĕ.

– Çĕр улми лартрăмăр та сыпрăм çав кăштах, – терĕ. Кăçал ача садĕнчен тухмалли ачи унра амăш туйăмне вăратсан тем пекехчĕ.

Тепĕр çемьере урăхларах ÿкерчĕк. Ашшĕпе амăшĕ иккĕшĕ те ĕçлеççĕ, килте урлă выртакан пĕр çÿппе те тăрăхла çавăрса хумаççĕ пулмалла ĕç хыççăн. Урайĕнче ура пусма вырăн çук япала йăваланать, савăт-сапа хăçан юлашки хут шыв курни çинчен калама та хĕн.

– Фермăран килеççĕ те сывăраççĕ пулмалла, – терĕç ял çыннисем.

Мĕн курса ÿсеççĕ ку çемьере ачасем? Кам вĕрентĕ вĕсене тирпее, илеме? Калама йывăр. Анчах çакна татсах калама пулать: ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕсене пурнăçламаççĕ кунта. Малалла та кун пекех лару-тăру пулсан çав тивĕçсенчен хăтарас ыйту сиксе тухма пултарать.

4 ачаллă çемьене пырсан вара арăмĕ упăшки хĕненĕ вырăнсене кăтартрĕ. Кĕлетки пĕтĕмпех кăн-кăвак. Çемьере харкашусем пирки арăмĕ пĕр тĕрлĕ, упăшки тепĕр тĕрлĕ ăнлантарать. Мăшăрне хĕненипе арçын тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарнă. Çакна лайăх пĕлетпĕр: кун пек хĕнесе пĕтерме мар, çынна сăмахпа та кÿрентерме юрамасть. Ку пĕр енчен. Тепĕр енчен вара йытăпа кушак пек туллашса пурăниччен уйрăм пурăнни лайăххах мар-ши? Ачасен психикине пăсмаççĕ-и вĕсем капла?

Профилактика кунне пĕтĕмлетнĕ чух сÿтсе яврĕç ку арçынна. Вĕсем мăшăрĕпе иккĕшĕ çемьешĕн усăллă, ачасене лăпкăлăх кÿрекен йышăнăва тăвасса шанас килет.

Мĕн калама пулать-ха ку тĕслĕхсем хыççăн. Ял администрацийĕн, вырăнти активăн çемьесем тĕлĕшпе çине тăрарах ĕçлемелли çинчен калать пулĕ. Паллах, ĕçекен çын ĕçме пăрахасси те, çын хăй килĕнче тирпейлесси те кил хуçинчен хăйĕнчен ытларах килет. Çапах та пĕрре каласан, тепре килĕнче пулсан, тата та калаççан, кăштах та пулин усси пулать пек туйăнать. Намăс туйăмне пурте пĕтĕмпех ĕçсе яма ĕлкĕреймен пулĕ-ха.

Чăнах та, вăхăт ытлашши мар паян ял çыннин, паян çĕр улми лартмалла, ыран çум çумламалла. Мансăрах тăвĕç-ха ку ĕçе тесе киле пăрăнса утсан, паллах, улшăну пулмасан та пултарать. Пирĕнтен кашнинех пырса тивет çакă. Май килнĕ таран çынна ырă тума тăрăшасчĕ. Ырă туни вăл ырăпах таврăнать. Пĕр енчи кÿршĕре те пулин пĕр ача та пулин телейлĕрех пурăнма пуçлани – мĕн тери ырă пулăм. Çакăнта хамăр тÿпе те пуррине курни хамăра та пурăнма вăй парать. Вулакансем манпа килĕшсен тем пекехчĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

Районăн пултаруллă çыннисем

# Пур ĕçре те правур



***Хăйĕн ĕç ĕмĕрне ял хуçалăхĕпе çыхăнтарнă Валерий Валерьевич Тихомирова (сăн ÿкерчĕкре) «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕн ĕçченĕсем лайăх енчен çеç пĕлеççĕ. Хăйне шанса панă ĕçе вĕçне çитерессипе уйрăлса тăрать вăл. Акă иртнĕ çур акире Валера хирти акаçăсене пĕр сехет те вăрлăхсăр лартмарĕ.***

***– Савăнатпăр эпир хамăрăн аслă тусăмăр ĕçченлĕхĕпе. Вылăх-чĕрлĕх ферминче ĕçлет-и вăл е çур акире те вырмара хирте вăй хурать – уппа юнашар чухне алă усса ĕçлесси пирки ан та шухăшла. Самантрах ăмăртуллă ĕçе астарса кĕрсе каять, – терĕ ака агрегачĕпе вăрлăх тултарма пынă А. Артемьев механизатор.***

***Юлташ хаклавĕнчен пахараххи вара çук.***

**А. БЕЛОВ сăн ÿкерчĕкĕ.**

# Альманахсем – çĕнĕ экспонатсем

Музейсем пуянланаççĕ

Иртнине пĕлмесĕр малашлăх çук тетпĕр-ха та, анчах историри пулăмсене хамăртан кĕçĕннисем валли курăмлă упраса хăварассипе эпир çителĕклĕ ĕçлетпĕр-и-ха? «Çук», – терĕç те Муркаш лицейĕнчи кадетсем, хăйсен сăмахне ĕçпе çирĕплетсе иртнĕ кунсенче хăйсем ăсталанă альманахсене районти краеведени музейне парнелерĕç. Çак чыслă ĕçпе кадетсен пĕр ушкăнĕ **(сăн ÿкерчĕкре)** С. Рожкова вĕрентекен ертсе пынипе музее пырса унăн директорĕпе А. Алешкинăпа тĕл пулчĕ. Савăнăçлă лару-тăрура кадетсем музее хамăр ентешсем 66 çул каяллахи Çĕнтерÿ мĕнле тÿпе хывни пирки каласа паракан «Пуриншĕн те сире тав тăватпăр» тата «Пирĕн ентешсем – тĕрлĕ вăхăт паттăрĕсем» ятлă альманахсем парнелерĕç.

– Пурнăçра паттăрлăх валли яланах вырăн пур. Фронтра-и, ĕçре-и е вĕренÿре-и – ыранхи куна ырă шанчăкпа пăхакан çын ыйăвăрлăхсем умĕнче пуç усмасть. Сирĕн паянхи ĕç те çакна çирĕплетекен тĕслĕх, – терĕ кадетсене тав тунă май музей директорĕ.




Ытларах упрасчĕ пирĕн хамăр историе!

**А. БЕЛОВ сăн ÿкерчĕкĕ.**

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# Вăрçă ачисемпе тĕл пултăмăр

***Ачасене воспитани парасси уй урлă утса каçасси мар. Çакна эпир хамăр ĕçре аван ăнланатпăр. Çавăнпа та ачасене пурнăç çулĕ çине кăларассине кун-çул аталанăвĕпе пĕр шайра тытса пыма тăрăшатпăр. Çăмăл мар çакă, анчах шыракан тупать.***

Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкул хăйĕн ĕç-хĕлне ял пурнăçĕпе тан тытса пырать. Çак çулпа пырса вĕрентÿ процесне час-часах ялти паллă, сумлă çынсене явăçтарать. Çакăн уссине вĕрентекенсем те, вĕренекенсем те, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те кураççĕ, ăнланаççĕ.

Кăçал Раççейре пурăнакансем пирĕн атте-асаттесемпе анне-асаннесем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче фашизма çапса аркатнăранпа 66 çул çитнине паллă турĕç. Çав Çĕнтерÿвĕн витĕмне эпир паян лайăх куратпăр, унăн пĕлтерĕшне ытларах ăнланатпăр. Апла пулсан пирĕн хамăрăн аслă ăруçи çыннăмăрсем çав хăрушă çулсенче мĕн чăтса ирттернине те манма юрамасть.

Çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче Шурчари тĕп библиотекăра Светлана Вениаминовна Троицкая пуçарăвĕпе пысăк тĕл пулу иртрĕ. Унта Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнă чух 7 – 12 çулсенче пулнă тата вăрçă хыççăнах çуралнă çынсем хутшăнчĕç. Шкул ачисемпе ирттернĕ тĕл пулăва пынă Нина Игнатьевна Андреева вăрçă пуçланнă чух 7 çулта, Дарья Кирилловна Терентьева 7 çулта, Юлия Ивановна Савельева 12 çулта пулнă. Вĕсем ашшĕсемпе пиччĕшĕсене тата ытти çывăх çыннисене фронта ăсатнине, ял çыннисем вăрçă хирĕнчен хурлăхлă хыпарсем илсен выртса макăрнине ĕнерхи пекех астăваççĕ. Аслă Çĕнтерÿ хыççăнах çуралнă Светлана Семеновна Тимофеева, Елизавета Петровна Иванова тата Зоя Михайловна Романова хăйсен çак пурнăçри пĕрремĕш утăмĕсене Тăван çĕр-шыва вăрçă юхăнчăкĕнчен ура çине тăратассипе тунă. Ветерансем каласа панинчен вĕсем ачаллах ĕçрен хăраманни, аслисемпе юнашар тăрса ĕçлени куç умне тухрĕ.

Д. Терентьева хăйне сăмах парсан ачасене вăрçă çулĕсене хире туxса крахмал пуçтарни пирки тĕплĕ каласа пачĕ. Вăрçă çулĕсенче çимелли пулманнипе пĕрлех тăхăнмалли енчен те çăмăл килмен. Çапла вара ачасем ашшĕ-амăш çине çеç шанса лармасăрах ачаллах çăпатапах шкула çÿренĕ, ĕçе кайнă, вылянă-кулнă.

– Паян эсир эпир каласа панине ăнланмастăр та пулĕ, анчах çакнашкал йывăрлăхсем пирĕн пурнăçра чăнласах пулнă. Эсир паян лайăх вĕренсен çеç унашкал хăрушлăхсем пирĕнтен те, сирĕнтен те пăрăнса иртĕç, – терĕ ачасен ыйтăвĕсем çине хуравланă май Ю. Савельева ветеран-педагог.

Тĕл пулу икĕ еншĕн те усăллă пулни пирки никамăн та иккĕленÿ пулмарĕ.

**Н. ТЮРИНА,**

**чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен.**

Ырă тĕслĕх

# Тав сăмахĕ – ашшĕ-амăшĕсене

Хальхи вăхăтра кирек епле юсав ĕçĕ те укçа-тенкĕпе çыхăннă. Строительство материалĕсем те укçасăр çук, юсав ĕçĕсемшĕн те тÿлеме тивет. Çавна ăнланса хăйсен пулăшăвне сĕнекенсене вара ырламалла тата тав сăмахĕ каламалла кăна.

Акă Шурча шкулĕн çивиттине юсама вăхăт çитнĕччĕ. Çавна валли район администрацийĕ уйăрса панă укçа-тенкĕпе тата вырăнти «Герой» хуçалăх спонсорла пулăшу кÿнипе строительство материалĕсене туяннăччĕ. Анчах та юсав ĕçĕсемшĕн тÿлеме укçа тупăнаймарĕ. Çакна ăнланса вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем юсав ĕçĕсене хăйсен вăйĕпе, тÿлевсĕрех пурнăçлама килĕшрĕç. Çанталăк условийĕсене, кану кунĕсене пăхмасăрах вĕсем ырми-канми ĕçлерĕç, сурт çивиттине кĕске вăхăтра юсаса пĕтерчĕç. Çавна май район администрацийĕ «Герой» хуçалăх ертÿçине Р.Н. Тимофеева, В.В. Бардасов предпринимателе, ашшĕ-амăшĕсенчен А.П. Пискарева, О.Л. Львова, С.Н. Тимофеева, А.В. Петрова, Э.А. Рыжкова, А.А. Рыжкова, В.Л. Михайлова, С.В. Иванова, С.В. Павлова, А.В. Семенова, В.Г. Андреева, В.А. Фадеева, А.М. Кудашова, П.В. Борзаева, В.И. Павлова, В.И. Якоба, Шурча ялĕн çыннисене В.В. Тюрина, М.В. Кожевникова пысăк тав сăмахĕ калать, вĕсене малашне те ăнăçусем, ырлăх-сывлăх сунать. Ытларах пулиннччĕ пирĕн хушăра çавăн пек ырă кăмăллăхпа палăрса тăракансем.

**Хамăр инф.**

Объявление

Мы, собственники земельных долей Соколов Меркурий Федотович, Петров Михаил Николаевич, объявляем о выделении земельных участков в счет земельной доли каждый общей площадью по 1,33 га, расположенного на территории землепользования бывшего СХПК им. Ленина Моргаушского района Чувашской Республики, Хорнойского сельского поселения, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:140501.

Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Хорнойского сельского поселения.

Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории землепользования бывшего СХПК им. Ленина Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, выделяемой в счет земельной доли, расположенной по адресу: ЧР, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, в южной части кадастрового квартала 21:17:140501.

Заказчики работ, собственники в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Соколов Меркурий Федотович, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Хорной. Паспорт серии 9703 № 941340 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 15.08.2003 г.; гр. Петров Михаил Николаевич, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, с. Тойгильдино. Паспорт серии 9704 № 195047 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 07.04.2004 г.

Согласование местоположения границ состоится 25.06.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».

